# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

94 (7411) № ✻ Шăмат кун, 2006 çулхи ноябрĕн (чӳк) 11-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


## Ĕнер Милици ĕçченĕсен кунне уявларăмăр

**ШАЛТИ ĔÇСЕН ОРГАНĔСЕН ХИСЕПЛĔ СОТРУДНИКĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

**Сире Милици кунĕ ячĕпе саламлатăп!**

Хастарлăхпа ăс-хакăл çирĕплĕхĕ, чыса тивĕç пулнипе ответлăх туйăмĕ, пĕр-пĕрне яланах пулăшма тата хăвăрăнтан мĕн килнине пĕтĕмпех тума хатĕр пулни сирĕн професси представителĕсемшĕн ют мар. Эсир хăвăрăн тивĕçе тата умри задачăсене йĕркеллĕ пурнăçласа пыратăр.

Сирĕн эффективлă тата йĕркеллĕ ĕçе пула республикăра преступленисене уçса парасси ӳссе пырать. Уйрăмах йывăр преступленисем тăвасси икĕ хута яхăн чакрĕ. Республикăра право йĕркине пăсассине асăрхаттарас тĕлĕшпе туса хунă система Раççейре чи лайăххисенчен пĕри тесе палăртнă. Эсир хăвăрăн професси ĕç-хĕлне мĕнле пурнăçланипе Чăваш Республикинчи политика тата экономика тăнăçлăхĕ те нумай енчен çыхăннă.

Саккунлăхпа право йĕркелĕхне çирĕплетсе пырассишĕн тивĕçлĕ вăй хунăшăн сире пысăк пархатар сăмахĕ калама тивĕç. Уйрăмах ветерансене тав тăватăп. Вĕсем хăйсен пуян опытне право сыхлавĕн органĕсен çамрăк сотрудникĕсене параççĕ. Сире тата сирĕн çывăх çынсене çирĕп сывлăх, ăнăçу, тăнăçлăхпа телей сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. ФЕДОРОВ.**

**ХИСЕПЛĔ МИЛИЦИ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире Милици кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Право йĕркине сыхлакансем яланах професси тивĕçне чун-чĕре хушнă пек пурнăçланă: обществăлла йĕркелĕхе сыхланă, граждансен сывлăхĕпе пурнăçне, вĕсен Конституципе панă прависене хӳтĕленĕ. Паян та хăвăр тивĕçĕрсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пыратăр.

Çăмăл мар сирĕн ĕç. Служба тивĕçĕ сире хăюллă та хастар, çирĕп кăмăллă пулма хистет. Пĕтĕм ĕçе пысăк яваплăхпа тăватăр. Нимĕнле йывăрлăха, нимĕнле хăрушлăха пăхмасăр лăпкăлăхпа тăнăçлăха сыхлатăр. Тавах сире çакăншăн.

Право йĕркине сыхлакан органсенчи ветерансен ырă йăли-йĕркисене малалла тăсатăр. Чăтăмлăх та, çивĕчлĕх те, хăвăр ĕçĕршĕн çунса тăни те вĕçĕ-хĕррисĕр пулмалла çакна валли. Паян - уйрăмах. Эсир малашне те хăвăрăн професси тивĕçĕсене таса чун-чĕререн пурнăçласса шанас килет. "Манăн милици мана хӳтĕлет"текен каларăш малалла та вăйрах пултăрччĕ.

Сире, сирĕн çывăх çыннăрсене çирĕп сывлăх, ăнлану, телей сунатăп. Çемйĕрсенче те, çĕршывра та яланах лăпкăлăх хуçалантăр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Вуннăмĕш тĕслĕх библиотека

# Вулавçăсемшĕн – пысăк парне



Ноябрĕн 1-мĕшĕнче район территорийĕнче Ярославка ял тăрăхĕнче вуннăмĕш тĕслĕх библиотека уçăлчĕ. Çак кун тата тепĕр уявпа пĕр килчĕ: Ярославкăри ял библиотеки уçăлнăранпа шăпах 50 çул çитрĕ.

Библиотекăна уçнă çĕре район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, район администрацийĕн социаллă аталану пайĕн пуçлăхĕ А.Е. Андреева, Ярославка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.В. Пайгусов, «Сеятель» хуçалăх ертӳçи А.Ю. Соловьев, «Чемеево» хуçалăх ертӳçи Н.Н. Петров, Нискасси шкулĕн учителĕсемпе вĕренекенĕсем, ĕç ветеранĕсем, библиотекăн вулавçисем хутшăнчĕç.

Библиотекăна уçнă май хăнасем библиотека аталанăвĕн кун-çулĕпе, хальхи информаци ресурсĕсемпе паллашрĕç. Кунта халĕ çĕнĕ компьютер оборудованийĕ вырнаçтарнă, аудио- тата видеотехника пур, çĕнĕ литература, CD тата DVD вĕренӳ дискĕсем туяннă.

Ю.А. Иванов хăйĕн сăмахĕнче ял çыннисене информаципе тивĕçтерсе тăрас ĕçре библиотекăсем пысăк вырăн йышăннине, ку ĕçĕн пĕлтерĕшĕ анлă пулнине палăртрĕ. Вăл тĕслĕх библиотека тума хутшăннисене пурне те тав сăмахĕ каларĕ, библиотекăна çĕнĕ литературăн тата электронлă изданисен комплектне парнелерĕ.

Библиотека уçнă ятпа ирттернĕ савăнăçлă мероприятире Нискасси шкулĕн директорĕ А.А. Калинкина, Нискассинчи «Улыбка» ясли-сад заведующийĕ Н.И. Платонова, активлă вулавçăсенчен пĕри, Нискасси шкулĕн вăрăмлатнă кун йĕрки ушкăнĕн воспитателĕ М.Н. Пушкарева тухса калаçрĕç, çак ĕçе хутшăннисене тав сăмахĕ тухса калаçрĕç. Тĕслĕх библиотека уçнă май ял тăрăхĕнче пурăнакансемшĕн пурнăçăн çĕнĕ тапхăрĕ пуçланнине палăртрĕç вĕсем.

Ĕç ветеранĕ, Ярославка ял библиотекин библиотекарĕ Т.О. Сарилова кунта 23 çул вăй хунă. Вăл библиотекăна мĕнле йĕркелени пирки аса илчĕ.

Нискассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕн тĕп врачĕ В.М. Басяев Ярославка тăрăхĕнче пурăнакансемпе вулавçăсене тĕслĕх библиотека уçăлнă ятпа тата юбилейпа саламларĕ, асăнмалăх парнесем пачĕ.

Библиотекăн çамрăк вулавçисем ЧР Президенчĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕ, район администрацийĕн социаллă аталану пайĕн пуçлăхĕ, районти тĕп библиотека сотрудникĕсем, Ярославка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ ячĕпе чи ăшă сăмахсем каларĕç.

**А. ЗАПОЛЬСКАЯ,**
**Нискасси шкулĕнче 11-мĕш класра вĕренекен.**

## Пирĕн интервью

# Йĕркелĕхе çирĕп алăра тытасчĕ



***Эпир çĕр çине хăнана çеç килетпĕр. Апла пулсан ĕмĕре тĕрĕс-тĕкел, никампа хирĕçмесĕр, çын çине алă çĕклемесĕр пурăнса ирттермелле пек туйăнать. Анчах та çакă туйăннипе çеç иртсе каять пулмалла. Ĕмĕр сакки камшăн сарлака, камшăн çав тери ансăр килсе тухать. Еплерех лару-тăру ку тĕлĕшпе районта, çакăнпа тĕплĕнрех паллаштарма ыйтрăм эпĕ районти шалти ĕçсен пайĕн ертӳçинчен Е.Д. МАКАРОВРАН.***

**– Евгений Дмитриевич, манăн милици мана хӳтĕлет теттĕмĕрччĕ те, çакă паянхи кунпа чăн килет-и е хамăр çине кăна шанмалла?**

– Паллах, çакă паянхи кунпа чăн килет, малтан та хӳтĕленĕ, халĕ та хӳтĕлеме тăрăшать. Эпир хамăр ĕçре çаксене тĕпе хурса ĕçлетпĕр. Вĕсем çаксем: кашни çынна хăрушсăрлăхпа тивĕçтересси, вĕсен саккунлă прависемпе ирĕклĕхне хӳтĕлесси, преступленисене уçса палăртасси, обществăлла йĕркелĕхе сыхласси, уйрăм çынсене тата юридици вăйĕнче тăракансене пулăшса вĕсен интересĕсене хӳтĕлесси.

**– Сирĕн çирĕп задачăсем районти пĕтĕмĕшле цифрăсем çине мĕнле витĕм кӳреççĕ?**

– Тăхăр уйăх пĕтĕмлетĕвĕсене тишкернĕ май районти шалти ĕçсен пайĕнче вăй хуракансемшĕн хĕрӳ тапхăр пуçланчĕ. Пĕтĕмпе дежурнăй уйрăмĕ 507 (425) иртнĕ çул криминаллă заявлени йышăнчĕ, вĕсенчен 378-шĕ (409) пирки уголовнăй ĕç пуçарнă. 753 ĕçе тишкернĕ май уголовнăй ĕç пуçарассине чарнă, 536 ĕçе тĕрĕслесе район тулашĕнчи шалти ĕçсен пайĕсене ярса панă.

Оперативлă профилактика ĕçĕсене вăхăтра тата тивĕçлĕ шайра пурнăçлани районти пĕтĕмĕшле криминаллă йĕркене алхасса кайма паман. Ытти йĕрке хуралçисемпе тачă çыхăнура ĕçлени пĕрлехи тивĕç çине ырă витĕм кӳчĕ, чылай вăхăт хушши уйрăмах йывăр преступлени тунă 13 çынна тытса чарма пултартăмăр.

Район территорийĕнче иртекен политика, обществăлла тата тĕнпе çыхăннă мероприятисенче пирĕн йĕрке хуралçисем яланах сыхă пулнă. Кăçалхи февраль-август уйăхĕсенче 5 милици сотрудникĕ Чечен Республикин территорине командировкăна кайса килчĕ. Июль-август уйăхĕсенче Санкт-Петербург хулинче 8 çĕршывăн лидерĕсем ĕçлĕ тĕл-пулу ирттерчĕç. Унти обществăлла йĕркелĕхе сыхлама 2 сотрудника ятăмăр. Çавăн пекех июнь-август уйăхĕсенче сывлăха çирĕплетмелли 8 лагерь территорийĕнче обществăлла йĕркелĕхе тивĕçтернĕ.

**– Çапах та преступлени тунă цифрăсем çинче тĕплĕнрех чарăнса тăрсамăр?**

Преступлени шучĕ республика шайĕнчи кăтартуран 8,3 процент чухлĕ сахалтарах. Преступленисене пăхса тухнă хыççăн 371 (276) уголовнăй ĕçе суда янă, 139 (115) уголовнăй ĕçе чарнă. Районти шалти ĕçсен пайĕ 212 (151) уголовнăй ĕçе суда янă. Тăхăр уйăх хушшинче "Шырав" ушкăн тимленипе 46 (36) преступление уçнă.

**– Преступлени тăвакан яланах тивĕçлипех явап тытма тивĕç. Ку енĕпе еплерех лару-тăру?**

– Иртнĕ çулхи çак тапхăрта преступленисене уçасси 70,6 процент пулнă пулсан, паян эпир ку кăтартăва 72,7 процента çити ӳстерме пултартăмăр. Çапах çакă пирĕншĕн лăпланса лармалли сăлтав мар, паллах. Республикăра вара ку ӳкерчĕк урăхларах. Иртнĕ çулхи 65,7 процентран 51,6 процента çити чакрĕ.

Шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем хăйсен тивĕçĕсене пурнăçлас тесе вăй-халне те, вăхăтне те шеллемеççĕ. Шырав уйрăмĕн пултарулăхне палăртас килет, вĕсем 121 уголовнăй ĕçе суда ячĕç. Шырав ушкăнĕ 91 уголовнăй ĕçе суда тăратрĕ. Ку кăтартусем республика шайĕнче малти вырăн йышăнаççĕ. Районти шалти ĕçсен пайĕ хăйĕн тивĕçĕсене аван ăнланса, вĕсене ĕçпе çирĕплетсе пурнăçлать. Çакă преступленисене уçса палăртас енĕпе лайăх кăтартусем тума май парать. Пирĕн сотрудниксем оперативлă ĕçлени преступленисене нумай чухне вăхăтра тупса пама пулăшать.

**– Преступлени тăвакан çынсем ытларах хăш категорине кĕреççĕ?**

– Паянхи пурнăçра эпир ытларахăшĕ укçа-тенкĕ çителĕксĕр, ĕç вырăнĕ çук тетпĕр е тата хуйхă-суйхă çăлăнăçне çутă шĕвеклĕ черкке тĕпĕнче шыратпăр. Çак сăлтавсем пулаççĕ те преступлени патне алă тăстаракансем.

Кăçалхи тăхăр уйăхра ниçта та ĕçлемен çынсем 231 преступлени тунă, иртнĕ çулхинчен 54 процент ытларах. Ушкăнпа тунă преступленисем иртнĕ çул 32 пулнă пулсан, кăçал 23 пулчĕ. Ӳсĕр пуçпа тунă преступленисем иртнĕ çул 57-пе танлашрĕç пулсан, халĕ вара ку кăтарту 82 çитрĕ е 43,8 процент ытларах. Малтан судпа айăпланнисем 57 преступлени тунă, çакă иртнĕ çулхинчен 54 процент ӳсрĕ.

Терорла актсене хирĕç кĕрешесси те пирĕн тĕп ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Хамăр тĕрĕслевсенче уйрăмах ют çĕршыв çыннисене, регистраци тăвас мар текенсене, çавăн пекех ирĕкрен хăтарнă вырăнсенчен килнĕ граждансем çине тимлĕх уйăратпăр. Паянхи лăпкă мар пурнăçра Кавказ çыннисене те куçран вĕçертместпĕр. Патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăхне сыхлакан сотруднисем уйрăмах вăрттăн тавар турттарма пултаракан пысăк фургонлă автомашинăсене пăхса асăрхасах тăраççĕ.

**(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).**

## Юбилей

### Саламлатпăр

Чуманкасси шкулĕнче нумай çул учитель пулса ĕçленĕ **Валентина Никандровна ИЛЛАРИОНОВАНА** 70 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Эсир ачасене тарăн пĕлӳ, тĕрĕс воспитани парас тесе нумай вăй хунă.

Çамрăк ăрушăн, ял-йышшăн, шкулти коллектившăн эсир яланах ырă тĕслĕх.

Сирĕн кун-çулăр вăрăм та тумхахсăр, сывлăхăр çирĕп пултăр. Пурнăç çулĕпе малалла та хальхи пекех шанчăклăн утмалла пултăр, мĕн ĕмĕтленни çитсе пытăр, хуйхă-суйхăна, чир-чĕре пĕлмесĕр пурăнма Турри вăй-хал парса пытăр сире. Çемьере яланах килĕшӳ, тулăх пурнăç пултăр. Эпир Сире юрататпăр, Эсир пурришĕн савăнатпăр.

**ЧУМАНКАССИ ШКУЛ КОЛЛЕКТИВĔ.**

## 01 пĕлтерет, асăрхаттарать

# Кивелнĕ электрохуçалăх

Чӳк уйăхĕн çуррине çывхарнă май черетлĕ хĕл тапхăрĕ те умрах пулни куç кĕрет. Ку вăхăт вара пушар хăрушлăхĕпе ытти тапхăрсенчен самай пуянрах. Апла пулсан асăрханулăха та çӳллĕрех шайра тытмалла. Çапла калатпăр, çакна пĕлетпĕр, анчах... Пушар хăрушсăрлăх правилисене хĕллехи вăхăтра пăхăнманни уйрăмах пысăк инкек патне илсе çитерет: вăй илнĕ "хĕрлĕ автан" тыткăнĕнче шартлама сивĕре пурăнмалли çуртсем, витесемпе сарайсем, мунчасем кĕлленеççĕ, çынсемпе выльăхсен пурнăçĕ таталать.

Халĕ каланине çирĕплетекен юлашки тĕслĕх. Муркаш салинчи Р. Михайлов хуçалăхĕнче пĕрремĕш кун мар хăй тĕллевĕпе усă курман мунчара электрохуçалăх тахçанах кивелнĕ ĕнтĕ, анчах кил хуçисем çакăн çине вăхăтра тимлĕх уйăрман: мунча çуртĕнче кайăк-кĕшĕк тытнă. Кивелнĕ электрохуçалăх ноябрĕн 7-мĕшĕнче 9 сехет те 50 минутра хăй çинчен систернĕ: мунча çуртĕнче пушар уралана пуçланă. Муркашри пушар чаçĕнчен, çывăхри "Свобода" тата "Герой" хуçалăхсен ведомствăлла пушар хуралĕсенчен пулăшу вăхăтра çитни çулăма айккалла сарăлма паман: кӳршĕсен пурăнмалли çуртне ирĕке кайнă çулăмран сыхласа хăварма май килнĕ.

Асăннă пушар кăçалхи 43-мĕш, ку хĕл пуçламăшĕнчи пĕрремĕш инкек. Юлашки çулсенчи кĕрхи-хĕллехи тапхăрти пушар хăрушлăхĕ пирки хаçатăн 5-мĕш страницинче вуласа пĕлме пултаратăр.

**А. ИЗОНОВ, патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн инспекторĕ.**

## Ыр кăмăллăх эрни иртрĕ

# Ватăсене манмастпăр

Чӳк уйăхĕн уяв кунĕсенче Москакасси ял тăрăхĕнче Ыр кăмăллăх эрни иртрĕ. Çак эрне хушшинче ял тăрăхĕн специалисчĕсемпе культура ĕçченĕсем нумай ырă ĕç тума ĕлкĕрчĕç. Чи малтанах вĕсем пĕччен пурăнакан ватă çынсем патне васкарĕç. Вĕсемпе тĕл пулса кулленхи ыйтусем çине хуравларĕç, вĕсен пурнăçĕпе кăсăкланчĕç. Тухса çӳремен ватăсене районтан газ, çутă кĕнекисем илсе килсе пачĕç, çĕр укçисене перекет банкне кайса тӳлерĕç.

Ял администрацийĕнче вара тумтир, кĕнеке, пуçтармалли штаб йĕркелерĕç. Япаласене хаваспах ял çыннисем килсе пачĕç. Ял администраци специалисчĕсем те ку ĕçе активлă хутшăнчĕç. Р.Г. Мальковапа З.П. Федорова пухăннă япаласене ватă çынсене валеççе парса тав сăмахĕсене тивĕçрĕç. Кашни киле пымассерен пĕччен çынсем хăйсене манманшăн, вĕсем патне çул тупнăшăн савăнчĕç.

Культура ĕçченĕсем те çак акцие пуçарулла хутшăнчĕç. Ял библиотекинче пĕччен пурăнакансемпе тĕл пулусем ирттерчĕç. Библиотекарь ватă çынсен килĕсене тухса çĕнĕ хаçат-журналпа паллаштарчĕ, пĕрле вуласа, сӳтсе яврĕç. Клуб ĕçченĕсем вара тата маттуртарах пулчĕç. Вĕсем ӳркенсе тămасăр Мăн Сĕнтĕрти ватăсен çуртне çитсе килчĕç. Пĕлесчĕ сирĕн, мĕн тери савăнчĕç вĕсем Г. Голубевана, Н. Кондукторована, Г. Вастрюкована курсан. Вĕсене кунта пурте пĕлсе, палласа çитнĕ. Тен, çак кунсенче кĕтсе те тăнă. Ятарласа çак куна валли хатĕрленĕ программа ватăсене çав тери килĕшрĕ. Юлашкинчен Н. Кондукторова купăспа чăваш кĕввине тăсса ярсан, ватăсенчен хăшĕсем яшлăха аса илсе ташлама та тухрĕç. Вĕсем артистсене тата килме хушса ячĕç, вĕсене ăсатнă чух куççулĕсене те шăлчĕç.

Ыр кăмăллăх эрни иртрĕ пулсан та, пирĕн чĕрере яланах ыр кăмăллăх çăл куçĕ тапса тăтăрччĕ. Пĕр-пĕрне яланах ырă кăмăлпа сывлăх сунар, йывăрлăхра, пĕчченлĕхре ал парса, хуйха-суйха пĕрле пайласа чир-чĕре, усалтĕселе пĕтерер.

**Р. СИБЯКОВА,**
**Москакасси ял библиотекарĕ.**